# Паха парне

Елена Мустаевăран çĕнĕ хайлав илни тӳрех хаваслантарчĕ. «Уй варринче çинçе хăва» (2015, 8№) повеçĕ питĕ хурлăхлă пулин те, вулакансем ăна лайăх хак пани савăнтарнăччĕ-çке. Чăнах та, тĕп сăнарăн, Санькан, шăпи чăтма çук синкерлĕ пулса тухни нумайăшне хытă кулянтарнă. «Кусçуль тăкмасăр вуласа тухаймарăм», – пĕлтерчĕ шухăшне хăшĕ-пĕри. Инкек-синкекĕ вăрçă вăхăтĕнче сиксе тухнă хыççăн хытă чĕреллисене пула ĕмĕр тăршшĕпех тăсăлнине чуна çатăрласа тытмалла кăтартать авторĕ. Акă çĕр тӳсейми йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ Санькапа мĕн пулса иртет юлашкинчен: «...Пурнăçра темĕн те тӳсрĕм. Ĕмĕрĕпе аннеллĕ ачасене ăмсанса пурăнтăм. Хам тăраниччен апат çисе кураймарăм. Ачасене хамăн шăпана сунмастăп. Анне ăшшинче ӳсчĕр. Хам ӳстеретĕп, – тупа турĕ хĕрарăм.

Хур ами чĕпписене çунатти айне илнĕ пек Санька тăватă ачине икĕ аллипе тытса çупăрларĕ. Такам туртса илесрен хăранăн хăйĕн çумне пăчăртарĕ. Лешсем чĕпĕсем евĕр пусĕсене ун çумне пĕкреç».

Куратпăр ĕнтĕ, шанăç пур. Ачисен чипер малашлăхне ĕненес килет. «Çапла пултăрччĕ!» – теме чун-чĕре ыйтать.

Елена Мустаева çĕнĕ хайлавне «Йӳçĕ пыл» ятлă панăччĕ. Çавна кура кулăшларах пуласса кĕтнĕччĕ ĕнтĕ. Анчах каллех кĕтмен инкек-синкек çамрăксен пусĕ çине йăтăнса анни çинчен иккен.

Хама халиччен ытлах çулланнă çын пекех туйман пулин те, калава вуласан тахçанхи-тахçанхи ачалăх аса килчĕ. Тăватă-пилĕк çулсенче пулнă-ши ун чухне эпĕ? Чӳречерен такама курнă атте-анне хыпăнса ӳкрĕ. Нумаях та вăхăт иртмерĕ – пӳрте тĕлĕнмелле пĕр карчăк кĕрсе тăчĕ. Темĕнле тумпа (чухлатăп халĕ, авалхилле тăхăннă). Сывлăх сунас вырăнне тӳрех çапла каласа хучĕ: «Çак ĕмелкесене мĕншĕн тытатăр, пăрахăр çӳп шатăкне. Хамăр турăсене мантăмăр. Çавăна япăхса кайрăмăр», – терĕ хыттăн хĕвелтухăç енчи кĕтесе тĕллесе кăтартса.

Çапла, эпĕ ача чухне ырăпа усала (чăваш тĕнне) ĕненесси пĕтменччĕ-ха. Хăш-пĕри вара чиркĕве те çӳренĕ, киремете те кайнă, юмăçа та утнă. Пирĕн саманара та тăсăлать-мĕн çакă.

Мана, институт доцентне, студентсене «Этика» тата «Основы православной культуры» дисциплинăсене вĕрентме тӳрĕ килнĕччĕ. Иккĕшĕн те тĕп никĕсĕ ырăпа усал çинче тытăнса тăрать. Кĕскен каласан, тĕп уйрăмлăхĕ çакă: Турра ĕненменскере чиркӳ яланах сивлет, этика (нравственность философийĕ) вĕрентĕвĕпе вара ате-

РЕДАКТОР САМАХĔ

ист та – çынна усал сунмасан, ырă çеç тусассăн – кăмăл-сипетлĕ...

Мухтаннă пек ан пултăр та, студентсем ман пата кăмăлласа çӳретчĕç. Тĕп тĕллевĕм ырра юратма, усала курайми тăвасси пулнă-çке. Основы православной культуры сехечĕсене мăсăльмансем те сиктерместчĕç (паллах, чиркĕве ирĕксĕр илсе кайман ĕнтĕ вĕсене). Ĕненессипе ĕненмесси – кашнин хăйĕн ирĕкĕ, анчах ĕненекенсене тата кашни тĕне хисеплеме пĕлмелле.

Елена Мустаевăн хайлавне пичете хатĕрленĕ чухне авторĕпе чылай канашларăмăр. «Йӳçĕ пыл» ят тивĕçтерейменĕ. «Çын телейне хапсăнса» та шухăша йăлтах уçса парайман пек туйăнчĕ. «Айăппа асап» ят патне пырса тухрăмăр.

Çын хăйĕн телейĕ çинчен çеç шухăшлани ыттисене асап кӳме пултарать иккен. Ирина – çавнашкаллисенчен пĕри. Тем тума та хатĕр вăл тивлечĕшĕн. Амăшне тухатмăш патне те ярать. Анисçан мĕн айăпĕ пур-ха? Чăнах та, вăл никама та усал сунмасть. Тепри ун айăпне те тупма пултарать, мĕншĕн тесен кĕлĕ сăмахĕсене шухăшласа тупса калать имĕш. (Пире вара ваттисем çапла вĕрентнĕ: вăрманта кĕлтунине те Турă илтет). Рая кинемейĕн (пĕтĕмĕшле илсен, ырă хĕрарăмăн) сĕнĕвне итлесе тĕшмĕшпе те кăштах аппаланма тивет-çке ăна.

Тепĕр хут çирĕплетсе çапла калама пулать: тĕне, тĕшмĕше айккине сирсе хăварсах айăплисене тупма пулать кунта. Петĕр – çăмăлттайлăхĕпе, Ирина хăйĕн телейĕшĕн çеç çуннипе асап кӳреççĕ ыттисене.

Тен, тепри сăлтавĕсене ытларах та тупасшăн. Кашнин хăйĕн ирĕкĕ. Илемлĕ литература шухăшлаттарма тивĕçлĕ.

***

Ултавпа, хаярлăхпа, пĕр-пĕрне ăнланма пĕлменнипе çынсем хĕн-хур кураççĕ, ĕçке пула чылай кил-йыш арканать. Çак инкексене сирсе яма май килнĕ таран пулăшаканĕсенчен пĕри – илемлĕ литература. Шел пулин те, юлашки çулсенче вулакансен йышĕ палăрмаллах чакрĕ. Çыраканĕсем те сахалланнăччĕ. Халĕ акă республика тулашĕ хускалчĕ.

Сăмахран, Ульяновск облаçĕнчи «Канаш» хаçатра ĕçлекен Елена Алексеева-Аксупи калавĕсем журналта тăтăшах тухреç. Тĕрлĕ çивĕч ыйтăва çĕклерĕ авторĕ, юрату вăл савăнăç кӳнисĕр пусне асаплантарма пултарнине те чуна çатăрласа илмелле кăтартма вăй-хал çитерчĕ, уйрăмах хĕрарăм шăпи канăçсăрлантарать ăна. Елена Алексеева-Аксупи çырнисене пухса «Каснă чĕлĕ» ятпа сумлă кĕнеке те кăларчĕ.

Вулакансене шантарсах калатпăр, сире килĕшекен хайлавсем тухсах тăрĕç. Çавăнпа та «Тăван Атăл» журнала çырăнса илме тăрăшăр. Халех! Шухăшкăмăлăра вара хыпарласах тăрăр. Эпир яланах хапăл пулăпăр.

Çакăн пек хăйне евĕрлĕ çĕнĕлĕх пĕлтерчĕç: ашшĕ-амăшне, тăванĕсене, хаклă çыннисене çуралнă кунĕ е пĕр-пĕр уяв ячĕпе «Тăван Атăл» журнала çырăнса парасси чылай çĕрте йăлана кĕнĕ иккен. Ырă пулăм ку, парни пĕр кунлăха çеç мар – темиçе уйăх савăнтарать!

**Василий КЕРВЕН**